27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 АПРЕЛЬ 11 ЫТЛАРИКУН №72(6567)

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАСАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем паян, апрелӗн 10-мӗшӗнче, пехота тата утлӑ соединенийӗсемпе механизациленӗ соединенийӗсен тӑшмана ҫавӑрса илмелли ӑста маневр тунипе тата фронтран атакӑланипе, Украинӑри область хулине, Хура тинӗс ҫинчи питех те паха порта — ОДЕССАНА — нимӗҫсен оборонин хӑватлӑн тӗрекленӗ пунктне, Румыни центрти районӗсем патне ҫулсене картласа тӑраканскере, туртса илнӗ.

ОДЕССАНА туртса илессипе пулнӑ ҫапӑҫусенче ЦВЕТАЕВ генерал-полковникӑн, ШЛЕМИН генерал-лейтенантӑн, ГЛАЗУНОВ генерал-лейтенантӑн, МОРОЗОВ генерал-лейтенантӑн, ГОРОХОВ генерал-майорӑн, РУБАНЮК генерал-майорӑн, КУПРИЯНОВ генерал-майорӑн, МАКОВЧУК генерал-майорӑн ҫарӗсем; ПЛИЕВ генерал-лейтенантӑн Кубань казакӗсен утлӑ соединенийӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ЖДАНОВӐН танкисчӗсем; артиллери генерал-полковникӗн НЕДЕЛИНӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ВОЗНЮКӐН, артиллери генерал-майорӗн ЛЕВИНӐН, артиллери генерал-майорӗн КОСЕНКӐН артиллерисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн СУДЕЦӐН, авиаци генерал-майорӗн ТОЛСТИКОВӐН, авиаци генерал-майорӗн ШЕВЧЕНКӐН летчикӗсем тата сыхӑну ҫарӗн генерал-лейтенанчӗн ЛЕОНОВӐН связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве палӑртса хӑварас тесе, ОДЕССАНА ирӗке кӑларас ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенийӗсене тата чӑссене «ОДЕССКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратӑп.

Паян, апрелӗн 10-мӗшӗнче, 20 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, виҫҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑран ҫирӗм тӑватӑ залп персе, ОДЕССАНА ирӗке кӑларнӑ ҫарсене салют парать.

Ҫав вӑхӑтрах Хура тинӗс флочӗн карапӗсем Хура тинӗс ҫинчи питӗ паха порта — ОДЕССАНА — нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ ҫарсене салют параҫҫӗ.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, ОДЕССАНА ирӗке кӑларас ҫапӑҫусене хутшӑннӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗшӗн тата никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи апрелӗн 10-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

АПРЕЛӖН 8-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Апрелӗн 8-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем СКАЛА хулинчен хӗвеланӑҫнерехре ҫавӑрса илнӗ тӑшман группировкине пӗтерсе тӑкассишӗн ҫапӑҫнӑ, темиҫе ял туртса илнӗ. Вӑл шутра ЕЗЕШАНЫ, ЛАНОВЦЕ, ГЛУБИЧЕК, БИЛЬЧЕ-ЗЛОТЕ, ВИНЯТИНЦЫ, КАСПЕРОВЦЫ ятлӑ пысӑк ялсем.

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, Карпат тӑвӗсем умӗнче тӑшмана поражени тӳстерсе, 200 километр сарлакӑшне ҫити фронтра пирӗнпе Чехословаки тата Румыни хушшинчи государство чиккине тухнӑ, Станислав облаҫӗнчи ПЕЧЕНЕЖИН, ЯБЛОНОВ, ЖАБЬЕ район центрӗсене, Черновицы облаҫӗнчи район центрӗсене — ВАШКОВЦЫ хулине, ВИЖНИЦА хулине, ПУТИЛА тата ГЛЫБОКА ялӗсене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 300 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — КОСМАЧ, КЖИВОРУВНЯ, УСЬЦЕРЫКИ, СЕЛЕТИН, КРАСНОИЛЬСК, ПЕТРОВЦЫ, КУПКА, СТАРЫЙ ВОЛЧИНЕЦ, ДЕУТШ ятлӑ пысӑк ялсем тата КОСЬМИН, АДЫНКАТА, КАРАПЧУ, ЧУДИН, КОСЧУЯ, ТИСАУЦЫ, ВЕРХОМЕТ, ВИЖНИЦА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Каялла чакакан тӑшмана хӑваласа пырса, фронт ҫарӗсем Румыни СЕРЕТ хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра—СТРАЖА, МИХЕЙЛЕНЫ, ДЕРСКА ятлӑ пысӑк ялсем.

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем ЯССЫ хулинчен ҫурҫӗртерехре 170 километр сарлакӑш участокра ПРУТ шывӗ урлӑ каҫнӑ та тӑшман оборонине татнӑ, вара тӑшман ҫарӗсене малалла хӑваласа пырса, 85 километр сарлакӑш фронтра СЕРЕТ шывӗ патне тухнӑ, ДОРОХОЙ хулипе БОТОШАНИ хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 150 пункта йышӑннӑ. Вӑл шутра — САТУ-МАРИ, ВАРФУКАМПУЛУЙ, БУЧЕЧА, ВЛЕДЕНИЙ, КОРНИ, ЖОЛДЕШТИ, ТУДОРА, УРИЧЕНИ, СУЛИЦА, КИШКЕРЕНИ, КОРНЕЛЕ-КАПРЕЙ, ФОКУРИЛЕ ятлӑ пысӑк ялсем тата ШЮЛДАНА, РЭДИУ, РЕУШЕНИЙ, ТОДИРЕНИЙ, ТРУШЕШТИ, УНГУРЕНИЙ, ВОРНИЧЕНИ, БРОСКЕУЦЫ, ВАКУЛЕШТИ, ЛЕОРДА, БУЧЕЧА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

ОДЕССА енче пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, тӑшманпа ҫапӑҫса 30 ял ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра—ЗЕЛЬЦЫ, КАНДЕЛЬ, ГРАДЕНИЦА, ЭЛЬЗАС, БОЛЬШОЕ ФЕСТЕРОВО, ОСТРАДОВКА, ИЛЬИНКА, ГИЛЬДЕНДОРФ (ОДЕССАРАН 13 километр ҫурҫӗртерехре) тата АЛЕКСАНДРОВКА ятлӑ пысӑк ялсем; РАЗДЕЛЬНАЯ хулинчен ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем ҫавӑрса илнӗ тӑшман группировкине пуҫӗпех пӗтерсе тӑкнӑ. Тӗрӗслесе тухнӑ даннӑйсем тӑрӑх, ку районра апрелӗн 6-мӗшӗпе 7-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: танксем—40, «Фердинанд» йышши хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—5, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—188, пулеметсем—284, лашасем—1.000 тата ытти ҫар пурлӑхӗсем нумай тытса илнӗ. 3.200 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ, хӑшпӗр нимӗҫ подразделенийӗсем хӑйсен пӗтӗм составӗпех организованно тыткӑна парӑннӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсен 7.000 вилли ытла выртса юлнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Апрелӗн 7-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 41 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 92 самолетне персе ӳкернӗ.

АПРЕЛӖН 9-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Апрелӗн 9-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем СКАЛА хулинчен хӗвеланӑҫнерехре, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере тата унӑн контратакисене сире-сире ярса, нимӗҫсен ҫавӑрса илнӗ группировкине пӗтерсе тӑкассишӗн ҫапӑҫнӑ, темиҫе ял туртса илнӗ.

Пирӗн ПРУТ шывӗпе СЕРЕТ шывӗ хушшинче наступлени туса пыракан ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса Румынири халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра—РОГОЗЕШТЕ, КЫНДЕШТИ, КАЛИНЕШТИ, САРАФИНЕШТИ, РУШИ, ФЭГЭДЗУ, КОТНАРИЯ, ЧЕПЛЕНИЦА, ХОДОРА, БЕЛЧЕШТИ, МУНТЕНИ, ВАЛЯ, ОЙЛОР, ЛАРГА, ЗАХОРНА (ЯССЫ хулинчен 12 километр ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре) ятлӑ пысӑк ялсем тата ВЛАДЕНИЙ, ЛАРГА, МОВИЛЕНИ, КУКУТЕНИ, ПОДУИЛОАЕЙ, БЕЛЧЕШТИ, КОТНАРИЙ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

Ҫапла пирӗн ҫарсем ЯССЫ хулипе ПАШКАНИ хули хушшинчи чугун ҫула татнӑ.

ОДЕССА енче пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере, малалла куҫса пынӑ, ТРОИЦКОЕ, ЯССКИ, ПЕТЕРСТАЛЬ. ЮЗЕФСТАЛЬ, МАРИЕНТАЛЬ, ЛЕНИНТАЛЬ, ФРЕЙДЕНТАЛЬ, КРАСНЫЙ ПЕРЕСЕЛЕНЕЦ (ОДЕССАРАН 18 километр хӗвеланӑҫнерехре), ВАСИЛЬЕВКА, ПЕТРОВСКИЙ, ВЫГОДА, ГНИЛЯКОВО, ПАЛИОВО, АЛЕСТОВО, ХОЛОДНАЯ БАЛКА, ЧЕРЕВИЧНЫЙ, АВГУСТОВКА, КОРСУНЦЫ, ШЕВЧЕНКО, ФОНТАНКА, КРЫЖАНОВКА ялӗсене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата ВЫГОДА тата СОРТИРОВОЧНАЯ (ОДЕССАРАН 5 километр ҫурҫӗртерехре) ятлӑ чугун ҫул станцийӗсене йышӑннӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Апрелӗн 8-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 104 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 71 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Скала хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫавӑрса илнӗ тӑшман группировкине пӗтерсе тӑкассишӗн ҫапӑҫнӑ. Пӗр соединени чӑсӗсем ҫӗрле ҫав тери хӑвӑрт маневр тунӑ та пӗр ялта ҫирӗпленсе ларнӑ нимӗҫсене сасартӑк пырса ҫапнӑ. Хаяр тытӑҫура совет боецӗсем 400 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. 200 нимӗҫ салтакӗпе офицерӗ, хирӗҫ тӑма пӑрахса, тыткӑна парӑннӑ. 3 юсавлӑ танк, хӑвӑрт перекен 4 зенитнӑй тупӑ, 15 хир туппи тата боеприпассен обозне тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн ҫарсем нимӗҫсем хытӑ хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та малалла куҫнӑ, темиҫе ял тытса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшман хӑй каялла чакма тытӑнсан сунтарса янӑ вӑрҫӑ техники нумай выртса юлнӑ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, 2.000 гитлеровеца ҫити вӗлерсе тӑкнӑ. Пирӗн авиаци тӑшманӑн ҫапӑҫури речӗсене татти-сыпписӗр пыра-пыра ҫапнӑ. Совет летчикӗсем кун каҫиччен нимӗҫсен 40 танкне, 10 бензин цистернине, 12 бронетранспортерне тата 250 автомашинине ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Пирӗн ҫарсем, Прут шывӗпе Серет шывӗ хушшинче ӑнӑҫлӑ наступление вӑйлатса пырса, Румынири халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла туртса илнӗ. Пӗр соединени чӑсӗсем тӑшманпа ҫапӑҫса Поду-Илоаей чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫапла вара Яссы хулинчен хӗвеланӑҫнелле каякан чугун ҫула татнӑ. Ку районра 900 нимӗҫпе румына ытла пӗтернӗ. Тӑшманӑн 250 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. Трофейӑсем тытса илнӗ, вӑл шутра тупӑсемпе боеприпассем нумай. Тепӗр участокра пирӗн пехотинецсемпе танкистсем румынсен пехотин пӗр батальонне атакӑланӑ. Совет боецӗсем хӗснине тӳсеймесӗр, Румынсем васкасах каялла чакма тытӑннӑ. Нимӗҫсен хыҫалта тӑракан отрячӗ румынсене пулеметпа пеме пуҫланӑ. Вара батальонран пӗтӗмпе те 43 румын салтакӗ кӑна чӗррӗн тӑрса юлнӑ, вӗсем те тыткӑна парӑннӑ.

* * *

Одесса енче пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Одесса патне пымалли вырӑнсенче нимӗҫсем малтанах оборона тӑрӑхне хатӗрлесе хунӑ, ҫав тӑрӑха тума вӗсем паха вырӑнсемпе — лимансемпе тата ҫырма-ҫатрасемпе усӑ курнӑ. Пирӗн ҫарсем, ҫӑмӑллӑн куҫса ҫӳрекен отрядсене пайланса тата ӑнӑҫлӑ маневрсем туса, тӑшмана тылран тата флангсенчен пыра-пыра ҫапаҫҫӗ, тӑшмантан пӗр позици хыҫҫӑн теприне турта-турта илеҫҫӗ. Пӗр гвардейски чӑсӑн подразделенийӗсем нимӗҫсен оборонинче начар ҫирӗплетнӗ вырӑн шыраса тупнӑ та тӑшмана ҫӗрле флангран атакӑланӑ. Гвардеецсем 300 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ тата персе тӑнӑ вырӑнтах 12 тупӑ тытса илнӗ. Одессӑран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тӑшман, пирӗн ҫарсем Хура тинӗс хӗррипе малалла куҫса пынине чарса лартас тесе, лиман ҫинчи дамбӑна сирпӗнтерсе янӑ. Вара шыв тинӗселле ҫав тери хӑвӑрт шавласа юхса кайнӑ, ҫыран хӗрринчи ҫула ҫӗмӗрнӗ. Таран майор командир пулса тӑракан чӑсри боецсем, пилӗк таран пӑрлӑ шывра ӗҫлесе, кӗске вӑхӑт хушшинчех шыв урлӑ каҫма кӗпер туса лартнӑ. Пирӗн ҫарсем ҫапла шыв урлӑ каҫса кайнӑ та, пӗр чарӑнса тӑмасӑр атакӑласа, тӑшмана Фонтанка ялӗнчен ҫапса кӑларнӑ. Ҫитӗнӗве вӑйлатса ярса, совет чӑсӗсем Одессӑран 5 километрта ларакан Сортировочная чугун ҫул станцине тытса илнӗ.

* * *

Белорусси фрончӗн пӗр участокӗнче Совет Союзӗн Геройӗ летчик Пологов подполковник хамӑрӑн позицисене сыхласа тӑнӑ чухне нимӗҫсен «Фокке-Вульф —190» йышши 4 истребительне тӗл пулнӑ. Хаяр тытӑҫура Пологов юлташ тӑшманӑн 2 самолетне персе ӳкернӗ. Анчах та ҫав вӑхӑтра Пологов юлташӑн самолетне сиенленӗ, самолет ҫунма пуҫланӑ. Шӑп ҫав вӑхӑтра ҫапӑҫу районне нимӗҫсен «Юнкерс—52» йышши 11 транспорт самолечӗ пырса тухнӑ. Пологов подполковник хӑйӗн ҫунакан истребительне ҫав самолетсем хушшине вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та нимӗҫсен пӗр транспорт самолетне хӑйӗн самолечӗпе пырӗнтерсе ҫӗмӗрнӗ. Пологов юлташ, хӑйӗн ҫунакан машининчен парашютпа сиксе, хамӑр территори ҫине ӑнӑҫлӑн анса ларнӑ.

* * *

Ҫурҫӗрти флотӑн асӑрхаса тӑракан посчӗсем ҫӗрле Финсен пӗр портӗнчен тинӗсе тухма тӑнӑ суднӑсен караванне асӑрханӑ. Советсен торпедӑсем яракан икӗ катерӗ нимӗҫсен караванне атакӑланӑ. Торпедӑсем тӳрех пырса тивнипе тӑшманӑн пӗр катерӗ шыва путнӑ тата караванри икӗ судно вӑйлах сиенленнӗ.

ВЛКСМ Центральный Комитечӗн черетлӗ пленумӗ ҫинчен

Информацилле пӗлтерӳ

Ҫак кунсенче Мускавра ВЛКСМ Центральный Комитечӗн XII-мӗш пленумӗ пулса иртнӗ. Пленумра ВЛКСМ обкомӗсен, крайкомӗсен тата комсомол союзлӑ республикӑсен Центральный Комитечӗсен пӗрремӗш секретарӗсем пулнӑ.

Пленум ҫак ыйтусене сӳтсе-явнӑ:

а) комсомолан шкулти ӗҫӗсене лайӑхлатмалли мерӑсем ҫинчен. Докладчик — ВЛКСМ Центральный Комитечӗн секретарӗ Н. А. Михайлов юлташ;

б) комсомол ялсенче ҫывӑх вӑхӑтра тумалли ӗҫӗсем ҫинчен. Докладчик — ВЛКСМ Центральный Комитет секретарӗ Н. П. Романов юлташ.

Сӳтсе-явнӑ ыйтусем тӑрӑх постановленисем йышӑннӑ.

Пленум ВЛКСМ Центральный Комитечӗн бюровне А. Е. Харламов, А. Н. Шелепин, Б. С. Бурков, Н. П. Красавченко, Ф. Н. Иванов, Ф. С. Костенко, М. В. Зимянин тата К. Ф. Сахарова юлташсене суйланӑ.

Пленум Ф. И. Наседкин юлташа, вӑл вӗренме кайнине пула хӑй ыйтнӑ тӑрӑх, ВЛКСМ Центральный Комитечӗн секретарӗнчен тата бюро членӗнчен хӑтарнӑ.

Пленума хутшӑнакансем, ҫав тери хавхаланса, Сталин юлташ патне саламлӑ ҫыру яма йышӑннӑ.

ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн IX пленумӗ

Апрелӗн 9-мӗшӗнче Шупашкарта, Совет ҫарӗсен Ҫурчӗн ларусем пулакан залӗнче, ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн IX-мӗш пленумӗ пулса иртнӗ.

Пленум организацилле ыйтусем сӳтсе-явнӑ.

Пленум П. М. Михайлов юлташа, ӑна парти ӗҫне куҫарнӑ май, ВЛКСМ Обкомӗн пӗрремӗш секретарӗн ӗҫӗсенчен хӑтарнӑ

Пленум Л. Х. Михайлов юлташа ВЛКСМ Обкомӗн пропаганда енӗпе ӗҫлекен секретарӗн ӗҫӗсенчен хӑтарса ВЛКСМ Обкомӗн пӗрремӗш секретарьне суйланӑ.

Комсомол активӗн республикӑри пухӑвӗ

Апрелӗн 9-мӗшӗнче Шупашкарта комсомол активӗн республикӑри пухӑвӗ пулса иртрӗ. Унта ВЛКСМ райкомӗн секретарӗсемпе комсомолӑн предприятисенчи, колхозсенчи тата шкулсенчи пуҫламӑш организацийӗсен секретарӗсем пулчӗҫ.

Пуху ВЛКСМ Центральный Комитечӗн XII-мӗш пленумӗн итогӗсем ҫинчен П. М. Михайлов юлташ тунӑ доклада сӳтсе-яврӗ.

Юлашки вӑхӑтра шкулсенчи комсомол тата пионер организацийӗсем хӑйсен ӗҫне чылай лайӑхлатрӗҫ. Шкул ачисем воспитани ӗҫне тата обществӑллӑ усӑллӑ ӗҫе активлӑнрах хутшӑнни палӑрать.

Кунпа пӗрлех пуху, комсомолӑн шкулсенчи пуҫламӑш организацисен ӗҫӗнче чылай ҫитменлӗхсем пуррине палӑртрӗ. Комсомол организацийӗсем шкулти воспитани ӗҫне тивӗҫлипе туса пымаҫҫӗ, ҫамрӑксене юлташлӑха, дисциплинӑна хӑнӑхма, мӗнпур йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме, паттӑр та тӳсӗмлӗ пулма вӗрентсе пымаҫҫӗ. Комсомол организацисем шкул дирекцийӗпе тата учительсен коллективӗпе килӗшсе ӗҫлемеҫҫӗ. Учительсем комсомол пухӑвӗсенче пулмаҫҫӗ. Комсомол активӗ шкул ачисен правилисене тӗрӗс пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе учительсене ҫителӗклӗ таран пулӑшса пымасть.

ВЛКСМ райкомӗсемпе горкомӗсем старши пионер вожатӑйсене суйласа илес ӗҫ ҫине ҫиелтен пӑхаҫҫӗ. Комсомол организацийӗсем тата пионер вожатӑйӗсем начар ӗҫленине пула пионерсем хӑйсен тивӗҫлӗхне пӑхӑнса пымаҫҫӗ: вӗсем сборсене те галстуксӑр пыраҫҫӗ, отрядсемпе дружинӑсем урама ялавсӑр, барабансӑр тата горнсӑр тухаҫҫӗ т. ыт. те.

Шкул тулашӗнчи учрежденисем (Шупашкарти пионерсен ҫурчӗ, ачасен техникӑллӑ станцийӗсем) шкул ачисен задачисенчен уйӑрӑлса тӑраҫҫӗ. Вӗсен ӗҫӗнче шкулта вӗренӳ пахалӑхӗпе дисциплинӑна ӳстерес пыма пулӑшни пачах та курӑнмасть. Ҫӗнтӗрвӑрринчи ачасен техникӑллӑ станцийӗн пуҫарӑвӗпе районра пионерсемпе шкул ачисем тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене вӗренессине йӗркеленӗ. Анчах та ҫак опыта республикӑри мӗнпур ачасен техникӑллӑ станцийӗсем патне ҫитермен. Ҫамрӑк пионерсен техникӑллӑ творчествин смотрне хатӗрленесси те ҫителӗксӗр пулса пырать.

Комсомолецсемпе пионерсем тата шкул ачисем иртнӗ ҫулта колхоз уйӗсенче мӗнпур вӑя хурса ӗҫлесе, ялхуҫалӑх ӗҫне ӑнӑҫлӑн вӗҫлеме пулӑшрӗҫ. Республикипе илсен, комсомолецсемпе ҫамрӑксем иртнӗ ҫулта 214 пин тенкӗлӗх запаслӑ пайсем пухнӑ. Ҫамрӑксен вӑйӗпе 1.116 сеялка, 11.294 плуг, 12.662 сӳре, 340 культиватор юсанӑ. Газогенераторлӑ тракторсем валли 4.600 кубометр чурка татса хатӗрленӗ, шултӑра мӑйракаллӑ 300 вырӑха ӗҫе вӗрентнӗ. Ҫуллахи вӑхӑтра 5.000 учитель тата 70.000 вӗренекен уйхир ӗҫне хутшӑнса, 2 миллион ҫурӑ ӗҫ кунӗ тунӑ. Кувакино районӗнчи Турдаковӑри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул 1943 ҫулта ялхуҫалӑх ӗҫӗнче активлӑ хутшӑнса ӗҫленӗшӗн РСФСР Сутӗҫ Халӑх Комиссариачӗпе ВЛКСМ Центральный Комитечӗн грамотине илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

ВЛКСМ Центральный Комитечӗ, комсомолӑн облаҫсемпе районсенчи тата пуҫламӑш организацийӗсен 1943 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсене пӑхса тухса, Чӑваш республикинчи комсомол организацийӗ 1943 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене активлӑн хутшӑнса ӗҫленине палӑртнӑ. Комсомолӑн Вӑрнар районӗнчи организацийӗ ВЛКСМ Центральный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне памалла тунӑ. Комсомолӑн Улатӑр районӗнчи «Путь Ильича» колхозри пуҫламӑш организацине тата Елчӗкри машинно-тракторнӑй станцинчи пуҫламӑш организацине ВЛКСМ Центральный Комитечӗн Хисеплӗ грамотисемпе наградӑланӑ.

Ҫакӑнпа пӗрлех пухура комсомолӑн Шӑмӑршӑ, Пӑрачкав, Кувакино, Ҫӗмӗрле, Ишлей, Канаш районӗсенчи пуҫламӑш организацийӗсем ҫуркуннехи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ирттерме начар хатӗрленнине палӑртрӗҫ. Ҫак районсенчи комсомол организацийӗсем колхозсене вӑрлӑх парса пулӑшас тата вӗсен пахалӑхне тӗрӗслес ӗҫсене сахал хутшӑнаҫҫӗ. Асӑннӑ районсенче ялхуҫалӑх машинисене, кӳлмелли хатӗрсене тата трактор инвентарьне юсасси те начар пырать.

Хӑшпӗр районсенче лашасем чылайӗшӗ ӗҫе юрӑхсӑр. Анчах ВЛКСМ райкомӗсемпе пуҫламӑш организацисем лашасене пӑхас ӗҫе шефа илесси ҫинчен манса кайнӑ. Ҫавӑн пекех вӑкӑрсене кӳлме вӗрентес тӗлӗшпе те мерӑсем йышӑнмаҫҫӗ.

ВЛКСМ райкомӗсемпе комсомолӑн пуҫламӑш организацийӗсем комсомолецсемпе ҫамрӑксен вӑйне колхозра тӗрӗс вырнаҫтарса тухас тӗлӗшпе нимӗн те тумаҫҫӗ. Вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе уйрӑм звеносем тӑвас ӗҫе кирлӗ пек ҫарса яман, агротехникӑна вӗренессине те начар туса пыраҫҫӗ.

Комсомол активӗн республикӑри пухӑвӗ ҫак ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ решени йышӑнса хӑварчӗ.

Пухура пирӗн земляк — Хӗрлӗ Ялав тата Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗсен кавалерӗ, гвардин кӗҫӗн лейтенанчӗ, Совет Союзӗн Геройӗ летчик Михаил Александрович Сапожников юлташ сӑмах тухса каларӗ. Вӑл ҫамрӑксене хӑйӗн фронтри боевой ӗҫӗсем ҫинчен каласа пачӗ.

ВКП(б) Обкомӗн секретарӗ Чарыков юлташ хӑйӗн сӑмахӗнче комсомолӑн шкулсенчи организацисен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсем ҫинчен чарӑнса тӑчӗ. Вӑл ВЛКСМ райкомӗсем шкул ыйтӑвӗпе ҫителӗксӗр интересленни тата шкул тулашӗнчи воспитани ӗҫӗн ҫитменлӗхӗсем ҫинчен, комсомол организацийӗсем ҫуракине хатӗрленес ӗҫре ҫителӗксӗр пулӑшса пыни ҫинчен каларӗ. Ҫавӑн пекех ВЛКСМ райкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсем хушшинче ҫирӗп ҫыхӑну ҫуккине, комсомол йышне ӳстерес тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлеме кирлине палӑртрӗ.

Пухура пӗтӗмпе 17 ҫын тухса каларӗҫ. Пуху ӗҫӗсене ВКП(б) Обком секретарӗсем Чарыков тата Лисин юлташсем, Совнарком Председателӗ Матвеев, Совет Союзӗн Геройӗ Сапожников, Сутӗҫ Халӑх Комиссарӗ Макаров, ВЛКСМ Центральный Комитечӗн представителӗ Басталов тата ытти юлташсем те хутшӑнчӗҫ.

Пуху республикӑри комсомолецсемпе ҫамрӑксем Сталин юлташ патне яма хатӗрленӗ тата шефа илнӗ Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флотӗнчи боецсемпе офицерсем патне яма хатӗрленӗ саламлӑ ҫырусене йышӑнчӗ.

Пуху хупӑнас умӗн П. М. Михайлов юлташ ВЛКСМ Центральный Комитечӗн бюровӗ хушнипе 1943 ҫулта ялхуҫалӑх ӗҫӗнче тата производствӑра лайӑх ӗҫленӗ 29 ҫамрӑка ВЛКСМ Центральный Комитечӗн Хисеплӗ грамотисене пачӗ.

М. И. Калинин юлташ хӑйне ырӑ сунса янӑ саламсене хирӗҫ ответ пани

Совет влаҫӗн верховный органӗн руководителӗ вырӑнӗнче 25 ҫул ӗҫленӗ май мана ырӑ сунса салам янӑ мӗнпур организацисене, ушкӑнсене тата уйрӑм ҫынсене чунтан-чӗререн тав тӑватӑп.

М. КАЛИНИН.

Колхозсенчи бригадӑсемпе звеносене ҫирӗплетер

Ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн туса ирттересси организацилле ыйтусене тӗрӗс татса панинчен, ӗҫ лайӑх планланинчен, ӗҫ вӑйне тӗрӗс вырнаҫтарса тухнинчен килет. Республикӑри колхозсенче халь ҫуракин производство ӗҫӗсем палӑрса тӑраҫҫӗ, ӗҫ вӑйне тӗрӗс вырнаҫтарса тухассӗ.

Ҫавна май республикӑри ҫӗре организацилле колхозсен руководителӗсен умне пысӑк та ответлӑ ӗҫ—колхозсенчи производствӑллӑ звеносене ҫирӗплетес ӗҫ тухса тӑрать.

1944 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсен планӗ ҫинчен ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ тырпул тухӑҫне ӳстерес, ялхуҫалӑх продукцийӗсем тата техникӑллӑ культурӑсен тухӑҫне пысӑклатмалли мерӑсене палӑртрӗҫ. Ҫав майсенчен пӗри вӑл — уйхир ӗҫӗсене лайӑх пахалӑхпа туни пулса тӑрать. Уйхир ӗҫӗсен пахалӑхӗн ыйтӑвӗ халь Хӗрлӗ Ҫарпа ҫӗршыва апат-ҫимӗҫсем йӗркеллӗ парса тӑрасси ҫинчен калакан ыйту пулса тӑчӗ.

Вӑйлӑ тухӑҫлӑ тырпул туса илесси, ӗҫе паха тӑвасси бригадӑсенчипе звеносенчи ӗҫе тӗрӗс йӗркеленинчен нумай килет. Ялсенчи партипе комсомол организацийӗсен, колхозсен правленийӗсемпе ялсовет исполкомӗсен ҫурхи ӗҫсене планланӑ вӑхӑтра бригадӑсемпе звеносене ҫирӗплетесси ҫине уйрӑмах тимлӗн ҫаврӑнса пӑхас пулать. Бригадӑсенче звеносем туса, вӗсене ҫӗр участокӗсем ҫирӗплетсе памалла, звеносене ячӗшӗн кӑна тӑвассине тӗппипех пӗтермелле.

Ӗҫе звеносем тӑрӑх йӗркелени тырпул тухӑҫне ӳстерес, ӗҫ пахалӑхне лайӑхлатас, колхозниксен ӗҫне уйрӑмшарӑн шута илсе хаклас тата ӗҫшӗн хушса тӳлемелли закона пурнӑҫа кӗртес ӗҫре питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Паян эпир Улатӑр районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхозри махорка туса илес тӗлӗшпе ӗҫлекен А. А. Травина юлташӑн звени пысӑк тухӑҫлӑ махорка туса илни ҫинчен статья пичетлесе кӑларатпӑр. Ҫав звенори колхозницӑсем Травина, Прокопенко, Савинова, Воротникова, Кольпова юлташсем хӑйсем ҫумне ҫирӗплетсе панӑ кашни гектартан 76—87 центнер махорка туса илнӗ. Ҫав районри «Путь Ильича» колхозри И. Я. Додонова юлташӑн звени гектартан вӑтам шутпа 60 центнер махорка туса илнӗ. Вӑрнар районӗнчи «Победа» колхозри Василиса Степанова ертсе пыракан звено кашни гектартан 110 пӑт тӗштырӑ туса илнӗ. Кун пек тӗслӗхсене Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан, «Марс», «Осоавиахим» колхозсенчен тата ытти районсенчи колхозсенчен те илсе кӑтартма пулать.

Анчах, тӳрех калас пулать, республикӑри нумай колхозсенче звеносем тӑвас ӗҫ питех те вӑраххӑн пулса пырать-ха. ВКП(б) Обкомӗн XVIII-мӗш пленумӗ парти райкомӗсемпе райсовет исполкомӗсем колхозсенче ӗҫе организацилес енӗпе сахал интересленнине палӑртрӗ тата ку ӗҫри ҫитменлӗхсене кӗске вӑхӑтрах пӗтерме хушрӗ. Апла пулин те Елчӗк районӗнчи Тимирязев ячӗпе тӑракан колхозра, Канаш районӗнчи «Комбайн», «Ударник» колхозсенче тата Сӗнтӗр районӗнчи «Родина» колхозра звеносене ҫирӗплетес енӗпе ку таранччен ниме те тумаҫҫӗ. Ун пек колхозсем ытти районсенче те сахал мар. Ҫак тӗслӗхсем вӗсем уйрӑм колхозсенче ӗҫе звеносем тӑрӑх йӗркелессине ку таранччен тивӗҫлипе хакламанни ҫинчен калаҫҫӗ.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ 1944 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсен планӗ ҫинчен йышӑннӑ постановленире колхозсенче производствӑллӑ звеносем тӑвасси, вӗсене ертсе пырасси ҫине уйрӑмӑнах тимлӗн ҫаврӑнса пӑхма хушрӗ. Пурне те паллӑ, колхозри ӗҫсен ӑнӑҫлӑхне бригадӑсем татса параҫҫӗ. Анчах бригадӑри кашни ҫын пӗтӗм вӑйне хурса ӗҫлетӗр тесен, ӗҫе звеносем тӑрӑх организацилени кирлӗ. Бригадир пӗр пӗччен бригадӑри кашни ҫын мӗнле ӗҫленине сӑнаса тӑма ӗлкӗреймест. Пысӑк бригадӑсенче уйрӑмӑнах ӗҫе тӗрӗслесе тӑма йывӑр. Начар ӗҫлекен ҫын та лайӑх ӗҫлекен колхозник хыҫӗнче пытанса юлма пултарать. Тӗрӗс организациленӗ звенора обезличка тата колхозниксене пӗр пекех тӳлессине пӗтерме лайӑх майсем пур. Ҫакна шута илсе колхозсенче халӑх кок-сагыз, йӗтӗн, махорка, пахча-ҫимӗҫ тата ҫӗр улми акса тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен тата вӑрлӑх участокӗсем ҫинче ӗҫлекен звеносемпе хуҫалӑхри ӗҫсене туса пыракан звеносене туса йӗркелесе ҫитермелле. Звеносем ҫумне ҫӗр участокӗсем ҫирӗплетсе памалла. Звенори колхозниксемпе колхозницӑсем ҫав участоксем ҫинче ҫуракинчен пуҫласа тырпулсемпе пахча-ҫимӗҫсене тата техникӑллӑ культурӑсене уйхиртен пухса кӗртиччен ӗҫлеччӗр.

Районсенчи партипе совет тата комсомол организацийӗсем бригадӑри ӗҫе звеносем тӑрӑх йӗркелессине хӑйсен ялан пысӑк та ответлӑ ӗҫӗ тесе шутламалла. Вӗсен звеносенчи ӗҫе лайӑхрах йӗркелеме, малта пыракан звеносен опытне ытти звеносем хушшинче сарма, ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетме райҫӗрӗҫ пайӗсемпе колхозсен руководителӗсене ӗҫлӗн пулӑшса тӑмалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри промысла кооперацийĕн артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи март уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Промысла кооперацийĕн артелĕсем енĕпе ăмăртура Чăваш лесопромсоюз системине кĕрекен «Лесоруб» артель (Сĕнтĕрвăрри районĕ) мала тухнă тесе йышăннă.

«Лесоруб» артель (правлени председателĕ Корнилов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Макашкин юлташ) март уйăхĕнче пĕтĕм продукци туса кăларас енĕпе хăйĕн плана 220 процент, кулленхи кирлĕ таварсем тăвас енĕпе плана 249,3 процент пурнăçланă. Февраль уйăхĕпе танлаштарсан, пĕтĕм продукци туса кăларассине 60,2 пин тенкĕ ӳстернĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне, Караньялĕнчи «Труд» артельтен илсе, «Лесоруб» артеле памалла тунă. Ăмăртура уйăхра палăрнă работниксене премийĕпе 15 пин тенкĕ укçа уйăрса панă.

Караньялĕнчи «Труд» артеле (Октябрьски район) 10 пин тенкĕ, Сĕмĕрлери «Красный Октябрь» артеле 5 пин тенкĕ, Чăвашпромсоюз системине кĕрекен Сĕнтĕр Уйăхсари артеле (Шупашкар районĕ) 5 пин тенкĕ укçа памалла тунă.

Инвалидсен кооперацийĕн артелĕсем енĕпе ăмăртура Канашри «Красный воин» артель (правлени председателĕ Корчагин юлташ, хула совет исполкомĕн председателĕ Белоусов юлташ) мала тухнă тесе йышăннă.

«Красный воин» артель март уйăхĕнче пĕтĕм продукци кăлармалли плана 113,6 процент, кулленхи кирлĕ таварсем кăлармалли плана 127,1 процент пурнăçланă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне, Йĕпреçри «Помощь» артельтен илсе, «Красный воин» артеле памалла тунă. Ăмăртура уйăхра палăрнă работниксене премийĕпе 15 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Шупашкарти «Чебоктри» артеле ăмăртура палăрнă работниксене премийĕпе 10 пин тенкĕ укçа уйăрса панă.

Çавăн пекех Совнарком март уйăхĕнче Улатăрти «Союз инвалидов», Йĕпреçри «Помощь», Комсомольски районри «Красный инвалид», Красноармейски районри «Маяк», Çĕрпӳри «Трудовик» артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Задание срокчен пурнăçланă

ЙĔПРЕÇ, апрелĕн 8-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Вăрманпромхозри рабочисемпе работницăсем Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем çине хăйсен ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем тунипе ответлеççĕ. Вăрманпромхоз пĕрремĕш кварталта пĕр промышленность валли йывăç хатĕрлесе турттармалли задание срокчен пурнăçланă. Иккĕмĕш кварталти йывăç хатĕрлемелли плана 30 процент, турттармалли плана 25 процент пурнăçланă. Ку ĕçре уйрăмах Çĕрпӳ тата Йĕпреç районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Вăрманпромхозра ĕçлекенсем, май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, иккĕмĕш кварталти задание те срокчен пурнăçласси пĕлĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ячĕç.

П. ФЕДОРОВ,
Вăрманпромхоз директорĕ

Çуракине большевикла хатĕрленер!

Сăвăнăçлă митинг

ЕЛЧĔК, апрелĕн 10-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Машинно-тракторнăй станцисенче ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕр ĕçĕн Халăх Комиссариачĕ куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 20.000 тенкĕ укçа премипе памалла тунине илсен, МТС-ри трактористсем, комбайнерсем, специалистсемпе служащисем сăвăнăçлă митинге пуçтарăнчĕç.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ С. В. Макаров юлташ Елчĕк МТС-не куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава тата 20.000 тенкĕ укçа премипе памалла тунине пĕлтерет.

— Халĕ Хĕрлĕ Çар Совет Союзĕн Румынипе Чехословаки чиккисене тухса тискер тăшмана Румыни территорийĕнче çĕмĕрсе пынă вăхăтра, пирĕн МТС-а ВЦСПС-ăн тата ССР Союзĕн Çĕр ĕçĕн Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пани МТС коллективне çуракине уйрăмах та пысăк çитĕнӳсем туса хушать. МТС трактористсемпе тракторискăсене кăçал çуракине татах та вăйлăрах ĕçлеме тивет. Мĕншĕн тесен иртнĕ çул кĕрхи çĕртме планне колхозсем тултарайман, чылай колхозсенчи лашасем вăйсăрланнă. МТС коллективĕн çураки вăхăтĕнче куне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеме тивет,—тет Макаров юлташ.

Митингра комбайнерсем, трактористсем, пĕрин хыççăн тепри тухса калаçса, хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илчĕç.

Республикăра паллă трактористсен бригадин пуçĕ пулакан Т. Стручков юлташ кашни трактора 87 гектар сухалама, план тăрăх 150 гектар сухалама обязательство илчĕ. Трактористка Лидия Уткина çулталăкри плана 200 процент тултарма, 8-мĕш бригадăри тракторист Павел Марков план тăрăх 350 гектар сухалас вырăнне 600 гектар, сурăхкине кăна 87 гектар вырăнне 150 гектар сухалама обязательство илчĕ.

Тракторист С. Волков план тăрăх 360 гектар сухалас вырăнне 900 гектар тăван сухалама пулчĕ. С. Бархин тракторист та 600 гектар сухалама обязательство илчĕ. Тракторист Яков Егоров çулталăкри плана икĕ хут иртерсе пурнăçлама пулчĕ.

МТС коллективĕ çураки вăхăтĕнче 5.950 гектар сухалас тата акас вырăнне 8.000 гектар сухалама, ĕç хакне 10 процент чакарма, тракторсемпе кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕнче 20.400 гектар çинчи ĕçе тăвас вырăнне 22.000 гектар çинчи ĕçе тума обязательство илчĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхоз председателĕ **П. Н. Майков** юлташ. Вăл ертсе пыракан колхоз çуракине тухма пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ.

Иртнĕ çул çак колхоз вăйлă тырпул туса илессине тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе чапа тухнă. Государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татнă хыççăн кооперации урлă 5.100 пăт тĕштырă сутнă, Майков юлташ хăй государствăна 100 пăт сутнă.

Н. Ф. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Лашасене халех кантарас пулать

ЧУРАЧĂК. Малти Ăнтавăшри Ленин ячĕпе тăракан колхоз çуракине хатĕрленсе çитнине тĕрĕслесе иртерчĕ. Колхозăн вăрлăхсем çителĕклĕ, пăрусĕр пусне вĕсен шăтас пахалăхĕ пурин те лайăх. Пăрин шăтас пахалăхĕ начар вара, пурĕ те 86 процент кăна. Колхозăн 15 плуг, 29 сӳре, 10 урапа, вĕсем пурте юсавлă, 7 сӳрене тĕрĕслев комиссийĕ, тĕрлĕ кăлтăксем пур пирки, йышăнмарĕ. Колхозăн лашасем валли ут таврашĕсем çителĕклĕ маррине те комисси паллă туса хăварчĕ.

Колхозра 48 ĕç лаши, вĕсенчен 18-шĕ кăна ĕçе юрăхлă. Вĕсене халех лайăх апат çине тăратса кантармалла, суракине кирлĕ пек хатĕрлесе çитермелле.

Г. ЕФИМОВ.

Шкулти комсомолецсен пулăшăвĕ

КӲКЕÇ. Алькешри тулли мар вăтам шкулта вĕренекен комсомолецсем, вĕренӳ пахалăхне ӳстерсе пынипе пĕрлех, колхозсене вăйлă тырпул туса илме активлăн пулăшаççĕ. Вĕсем кăçал Алькеш ялсоветне кĕрекен колхозсене 45 центнер кĕл, 27 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса пачĕç, 21 гектар çинче юр тытрĕç, хире 456 лав тислĕк кăларчĕç тата 5 центнер çĕр улми тăрри касса хатĕрлеççĕ.

Комсомолецсем обществăлла ĕçе активлăн хутшăнса ĕçленине пула, пуçламĕш комсомол организацийĕ (секретарĕ Данилова юлташ) кунран кунах ӳссе пырать. Паянхи куна комсомолецсен йышĕ 24 çынна çитрĕ.

Çатра Хучахматри тулли мар вăтам шкулта вĕренекен комсомолецсем те шкул сывăхĕнчи колхозсене пысăк пулăшу параççĕ. Çак кунсенче вĕсем колхозсене 25 тонна кĕл, 2 тонна кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса пачĕç.

Г. ПЕТРОВ.

Планран иртерсе 280 центнер махорка

1943 çулхи кăççенчен пĕрниче Улатăр районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн членĕсем пысăк тухăçлă махорка пухса илесси çинчен хĕрӳллĕн сӳтсе-явнă. Ку артель çулсерен махорка аван туса илнĕ. Анчах халĕ фронтпа çĕршыв валли махорка ытларах кирлĕ, колхозниксем çавăнпа хăйсен ĕçĕпе канăçман. Хăйсем акса тăвакан лайăх çĕр çинче махорка ытларах туса илме май пуррине вĕсем лайăх пĕлнĕ. Уйрăмах махорка туса илес ĕçре пысăк опыт туяннă колхозницăсем хĕрӳллĕн калаçнă.

— Эпир ĕçрен хăрамастпăр. Пысăк тухăçлă махорка туса илме сăмах паратпăр, анчах ĕçлеме май туса парăр пире,—тенĕ вĕсем. Махорка плантацине уйрăм звено сумне çирĕплетме, ачасем валли ясли уçма тата обществăлла столовăй уçма ыйтнă хĕрарăмсем.

Правлени членĕсем хĕрарăмсен çак ыйтăвĕсене пурнăçлама сăмах панă.

Çавăн хыççăн уйрăм звено тума тата ун çумне махорка плантацине яланлăха çирĕплетме йышăннă. Звенона ертсе пыма Нюша Травинăна суйланă.

— Нюшăран лайăхрах звеньевой тупаймастпăр, вăл колхозра лайăх ĕçлет тата унăн киленче те ĕçе сахалтарах, вăл звенона ăнăçлăнах ертсе пыма пултарать, —тенĕ хĕрарăмсем.

Çапла вара Травина юлташ звеньевой пулса тăнă.

Травина юлташ тепĕр кунах звено валли сынсем суйласа илес тĕлĕшпе ĕçлеме пуçлана. Чăн малтанах вăл хăйсен ирĕкĕпе кĕрес текенсене пухнă, анчах кам мĕнле ĕçлеме пултарнине яланах шута илнĕ.

Звено ĕçе тытăннă: вăрлăхсене тĕрĕсленĕ, парниксем тата ун çине витмеллисене хатĕрленĕ.

Юр кайса пĕтсен махоркăна парниксенчен кăларса уя лартнă. Çапла вара пысăк тухăçлă махоркăн никĕсне ăнăçлăн хывса хăварнă.

Махорка лартса тăвакансем тăрăшарах ĕçлетчĕр тесе, колхоз правленийĕ вĕсене кашнинех пĕрер гектар плантаци çирĕплетсе панă, унта вĕсем махоркăна пăхса илеччченех ĕçлемелле тунă.

Колхозницăсем çакăн пек тунине пурте ырланă. Çапла вара колхозра çак ырă ĕç пуçланса кайнă.

Хăшпĕр колхозниксем ĕç ăнассине ĕненмен. Анчах практикăлла ĕç çак ĕçĕн тĕрĕслĕхне часах çирĕплетсе панă. Махорка тăвакансем хăйсен ĕçĕ ăнăçассине ĕненсе, пикенерех, пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тытăннă. Вĕсем хăйсен участокĕсенче кунĕкунĕпе тăрăшса ĕçленĕ. Ирхине сутăлсан пына та каçхине тĕттĕм пулсан тин ĕçрен таврăннă. Юратса тунă хăйсен ĕçне. Çу каçиччен йăран хушшисене ик-виçĕ хут çемçетнĕ, махорка тăррисене татнă, сумланă. Кашниех ырми-канми ĕçленĕ. вĕсемпĕн кашнинпĕнех колхозăн, звенон чысĕ ытла та хаклă пулнă.

Ялзахи пекех малта коммунистсем пынă. Вĕсем большевикла хĕрӳ сăмахпа, хăйсен ĕçĕнчи паха тĕслĕхĕсемпе партире тăман тантăшсене ертсе пынă. Вĕсем махорка тăвакансем хушшинче социализмлă ăмăртăва организациленĕ. Вĕсенчен чăн лайăххисем—Травина, Прокопенко, Воротникова юлташсем хăйсене хăйсем хĕрхенмесĕр ĕçлесе звенора кăна мар, пĕтĕм колхозра паллă та хисепе тивĕçлĕ çынсем пулса тăнă.

Лайăх пăхнине кура, махорка тӳрех çитĕннĕ, пысăк тухăçлă пуласси курăнсах тăнă.

Махорка тăвакансен ĕçĕ ăнăçлă вĕçленнĕ. 15 гектар çинче кашни гектартан вăтам шутпа 34 центнер пухса илнĕ, планпа пурĕ те 14 центнер кăна туса илме пăхнă пулнă. Травина, Прокопенко, Савинова, Воротникова, Кольцова юлташсем тĕллĕнмелле пысăк тухăçлă махорка пухса илнĕ, вĕсем хăйсен çумне çирĕплетне гектарсенчен 76—87-шер центнер махорка туса илнĕ.

Çакăн пек пысăк тухăçлă махорка пухса илнине кура, колхоз государствăна планран иртерсе 280 центнер махорка панă та уншăн 340 центнер тĕштырă илнĕ.

Махоркăна пăхма уйрăм колхозницăсем сумне çирĕплетсе пани—ку ĕçе вăйлатса пыма пулăшать. Çавăнпа та çак паха пуçарăва кашни колхозрах анлăн сарса ямалла.

Г. ТИМОФЕЕВ.

Ют çĕршывсенче

Рузвельт калани

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Пресс-конференцире США президенчĕ Рузвельт Хĕрлĕ Çарăн наступленийĕ питĕ ăнăçлă пулса пынине палăртнă.

Италин ялан ĕçлесе тăракан исполнительнăй джунти йышăнни

АЛЖИР, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Кăçалхи январь уйăхĕн юлашки кунĕсенче Бари хулинче Италие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен провинци комитечĕсен представителĕсен конгресĕ пулса иртнĕ. Çав конгресра фашизма хирĕç кĕрешекен мĕнпур вăйсемпе демократи вăйĕсене пурне те пĕрлештерес шутпа Италин ялан ĕçлесе тăракан исполнительнăй джунти ятлă органне тунă. Апрель уйăхĕн пуçламĕшĕнче Кăнтăр Италире çав джунта икĕ лару туса ирттернĕ. Пĕр ларăвĕ апрелĕн 3-мĕшĕнче пулса иртнĕ, тепĕр ларăвĕ — апрелĕн 6-мĕшĕнче.

Джунтăн апрелĕн 3-мĕшĕнчи ларăвĕ Неаполь хулинче пулнă. Ку ларура Италири коммунистсен партийĕн джунтăра тăракан представителĕсем пана сĕнӳсене пăхса тухнă. Çав сĕнӳсенче çапла калана: Италирен нимĕçсене хăвăртрах хăваласа кăлармалла тăвас тесен, вăрçă ĕçне вăйлатса ямалла. Çавăнпа та Италири фашизма хирĕç тăракан мĕнпур партисен, çавăн пекех демократиллĕ партисен те, Бадольо правительствипе пĕрле килĕштерсе ĕçлеме тытăнмалла. Ку ларура татăклă решени йышăнайман. Çапах та джунтăра тăракан пур партисен представителĕсем те хăйсен ку таранчченхи требованийĕсемпе планĕсене улăштарма килĕшнĕ.

Çакăн хыççăн апрелĕн 6-мĕшĕнче Сорренто хулинче джунтăн тепĕр ларăвĕ пулса иртнĕ. Ку ларура фашизма хирĕç тăракан мĕнпур партисен представителĕсем те пулнă, вăл шутра—либералсен партийĕн лидерĕ Кроче, парти лидерĕ граф Сфорца тата Италири коммунистсен партийĕн деятелĕ Эрколи. Джунта пĕр саслă пулса çакăн пек резолюци йышăннă: Италире халех, союзниксен çарĕсем Рима илессе кĕтсе тăмасăрах, çар правительстви тумалла, унта фашизма хирĕç кĕрешекен пур партисен представителĕсене те кĕртмелле.

Сфорцăпа Кроче çакăнпа пĕрлех Виктор-Эммануил короле Рима ирĕке кăлариччченех вырăнтан сирпĕтмелле тесе çине тăраççĕ.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 5-мĕш армийĕн тата акăлчансен 8-мĕш армийĕн тĕп фрончĕсенче патрульсем тытăça-тытăça илнĕ. Икĕ енчен те пĕр-пĕрин çине артиллери персе тăнă. Анцио патĕнчи кĕпер умĕнчи укрепленисем çинче американецсен патрулĕ тăшманпа тытăçса илнĕ хыççăн унăн пĕр тĕреклĕхлĕ пунктне туртса илнĕ.

Далмаци сыранĕсем патĕнче тăшманăн апат-çимĕç турттарса пыракан шхунине тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Союзниксен авиацийĕ çаплах тăшманăн çар объекчĕсене пыра-пыра тапăннă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 31 самолетне персе ӳкернĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: апрелĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен çамăл çар карапĕсем çинчи артиллери нимĕçсем оккупациленĕ Бар хулине тата унăн гаванне пенĕ (Бар хули вăл Югослави сыранĕн кăнтăр пайĕнче).

Фронтра патрульсем çапăçаççĕ. Тăшмана сынсемпе техника тĕлĕшĕнчен сухатусем кӳнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Ĕнер союзниксен самолечĕсем тăшманăн Италири объекчĕсенчен чылайĕшĕ çине, çавăн пекех тата Никшич хули çине бомбăсем пăрахнă (Никшич хули вăл Югославире, Цетинье хулинчен сурçĕртерехре).

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ пĕр пин вĕçеве яхăн тунă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: американецсен 500-тен пуçласа 700-е çити йывăр бомбардировщикĕ апрелĕн 8-мĕшĕнче кăнтăрла Брауншвейг хулинчи авиаци завочĕсене тата Çурçĕр-Хĕвеланăç Германири аэродромсене тапăннă. Бомбардировщиксене 500 истребителе яхăн хӳтĕлесе пынă. Ку хутĕнче унччен çĕмĕрнĕ заводсенех тапăннă, вĕсене нимĕçсем çĕнĕрен хута яма ан пултарччăр тесе тапăннă.

Бомбăсем нумайĕшĕ тĕллеве тӳрех пырса тивни паллă пулнă.

Çав кунах 200 бомбардировщика яхăн Бельгири Хассельт ятлă пысăк чугун çул узелне тата Бельги сыранĕнчи аэродромсене тапăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕ çапла пĕлтерет: апрелĕн 9-мĕшĕнче кăнтăрла бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Тутоври, Варнемюндри тата Мариенбургри (Германи), çавăн пекех тата Познаньри (Польша) авиаци завочĕсене тапăннă. Тапăннă вăхăтра лайăх çанталăк пулнă.

АНГЛИ САМОЛЕЧĔСЕМ ГЕРМАНИ СУДНИСЕН КАРАВАННЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Англи самолечĕсем Норвеги сыранĕ патĕнче Германи суднисен караванне тапăннă. Пĕр пысăк суту-илӳ суднине торпеда ярса путарнă, икĕ суднине вут тивертсе янă.

ФРАНЦУЗСЕН ТИНĔС-ÇАР ФЛОЧĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Француз халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитетăн тинĕс-çар флочĕн комиссарĕ Луи Жакино каланă тăрăх, французсен флочĕ союзниксене питĕ пысăк пулăшу парать. Юлашки 5 уйăх хушшинче çав флотăн карапĕсем союзниксен суднисен 140 караванне хăйсем çеç, 73 караванне союзниксемпе пĕрле хуралласа пынă. Французсен крейсерĕсем çарсем илсе çӳреççĕ, тăшман сыранĕсене переççĕ, гарнизонĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ, тральщикĕсем тинĕсе минăсенчен тасатаççĕ.

КОНСУЛЬТАЦИ АССАМБЛЕИ ФРАНЦИН ГОСУДАРСТВО ВЛАÇНЕ ОРГАНИЗАЦИЛЕС ТĔЛĔШПЕ ПАНĂ СĔНӲСЕМ

АЛЖИР, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Франс-Африк агентстви çапла пĕлтерет: Французсен вăхăтлăх консультаци Ассамблейи Франци ирĕке кăларнă хыççăн Франци государство влаçне мĕнле организацилемелли проекта ырланă. Халĕ çав проекта декрет туса пичетлесе кăларма Француз халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен наци комитетне панă.

Ассамблея ырланă проект, Виши «правительстви» иртĕнсе кайса туса лартнă администраци органĕсене пăрахăçа кăларса, республика законĕсене мĕнле майпа çĕнĕрен пурнăçа кĕртсе ямаллине кăтартса панă. Республика законĕсем çĕнĕрен вăй илччĕр тесен, ĕлĕк суйланă депутатсене каллех хăйсем йышăнса тăнă постсене памалла, анчах та Германипе килĕштерсе ĕçленĕ депутатсене ку шута кĕртмелле мар. Вара çапла майпа муниципалитетсемпе генеральнăй советсене çĕнĕрен ĕçлеттерме тытăнмалла. Кашни департамент префектне çав департаментри халăха ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет пулăшса тăмалла. Консультаци Ассамблейи Франци француз халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен наци комитечĕпе пĕр вăхăтрах куçать. Францире Ассамблея составне, Ассамблея кăтартса панă йĕркe тăрăх, çĕнĕ çынсем кĕреççĕ. Францин виçĕ пайĕнчен икĕ пайне, вăл шутра Париж хулине ирĕке кăларсан, Консультаци Ассамблейи Наци Представителĕсен Ассамблейи пулса тăрать. Вара çак Наци Представителĕсен Ассамблейи, хăйĕн чи пысăк йышĕ пĕр саслă пулса сасăланипе вăхăтлăх правительство пуçлăхне суйлать. Çав çын вара правительство тăвать. Ăна вăл çирĕплетме Ассамблея умне тăратать. Çав вăхăтлăх правительство влаçа хăй аллинче учредительнăй Ассамблея ĕçе тытăниччен тытса тăрать.

ЖИРО ГЕНЕРАЛА ФРАНЦУЗСЕН ÇАРĔН ГЕНЕРАЛЬНĂЙ ИНСПЕКТОРНЕ ЛАРТНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: паян Алжирти радио французсен Алжирти главнăй штабĕн пĕлтерĕвне панă. Çав пĕлтерӳре Жиро генерала çарăн генеральнăй инспекторне лартни çинчен каланă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ВЕНГРИРИ ТЕРРОРĔ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» ятлă хаçатăн Буэнос-Айресри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Венгрин Швейцарири посланникĕ Буэнос-Айреса телефон тăрăх çапла пĕлтернĕ: гитлеровецсем Венгрире 20.000 венгра яхăн хупса лартнă. Паллă политика деятелĕсене нумайĕшне персе пăрахнă. Венгрин ют çĕршывсенчи посланникĕсем Венгрин гитлеровецсем тунă правительствине, Стоян пуç пулса тăраканскерне, нихăшĕ те пăхăнма килĕшмен. Вăл правительствăна Венгрин посланникĕсенчен пĕр Анкарари посланникĕ Вэрнле нимĕç кăна пăхăнма килĕшнĕ.

МАРШАЛЬ УТРАВĔСЕМ ÇИНЧИ ЛАРУ-ТĂРУ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). США-н тинĕс министерстви çапла пĕлтерет: американецсем Маршаль утравĕсен шутне кĕрекен 14 тĕп утрава контрольлесе тăраççĕ.

ГРЕЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Каирта пурăнакан Греци правительстви официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Юлашки кунсенче пулса иртнĕ канашлусем хыççăн Греци правительствин членĕсем пурте пĕр саслă пулса, Цудерос премьер-министрпа пĕрле çитес канашлусем пулса иртиччен хăйсен вырăнĕнчех юлмалла тунă.

Вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнчи çитменлĕхсене халех пĕтерер

Партипе правительство шкулсенчи вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатассишĕн куллен тимлĕн тăрăшаççĕ. Арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăмшарăн вĕрентмелле туни, вĕренекенсем хăйсене тыткаламалли правилăсене ĕçе кĕртни, вĕренӳ ĕçĕнче социализмлă ăмăртăва пăрахăça кăларни тата пĕлӳлĕхе баллсем тăрăх хакламалла туни, — çаксем пурте вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатмалли условисем пулса тăраççĕ. Çавăнпа пĕрлех вĕсем шкулсен, сутĕç органĕсен тата профсоюз организацийĕсен ĕçне çĕнетсе йĕркелеме хушаççĕ.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче малта пыракан учительсем вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсене пурнăçа кĕртрĕç. Шкулсенче дисциплина çирĕпленчĕ, вĕренӳ пахалăхĕ лайăхланчĕ. Çапла, Шăхасан районĕнчи Матьшу шкулĕнчи учительсем шкулти пĕтĕм ĕçе вĕренӳ пахалăхне лайăхлатас тĕллевпе организацилесе пыраççĕ. Çавна пула унта вĕренӳ пахалăхĕ те лайăх. Сĕмĕрле районĕнчи Чăваш Улхашри 7 çул вĕренмелли шкулта 6-мĕш класра вĕренекенсем вырăс чĕлхине çирĕп пĕлӳ илеççĕ. Учительница О. Ефименкова юлташ ачасене лайăх вĕрентет. Унта кашни вĕренекен вĕренӳшĕн ответлăха туйса тăрать. Çавăн пекех Улатăрти 7-мĕш номерлĕ шкулти учительница Агрова юлташ та вĕренекенсене çирĕп пĕлӳ парать, тирпейлĕ пулма вĕрентет. Вăл вĕрентекен ачасем çирĕп пĕлӳ илеççĕ. Кун пек тĕслĕхсене татах та нумай илсе кăтартма пулать.

Анчах хăшпĕр шкулсен руководителĕсем шкулсен ĕçне çĕнетсе лайăхлатас тĕлĕшпе сӳрĕккĕн ĕçлеççĕ-ха. Хăшпĕр шкулсенче пăрахăçлана меслетсене—социализмлă ăмăртăва тата пĕлĕве пĕтĕмĕшле хакласине халĕ те пĕтермен. Сĕнтĕр районĕнчи Юнкă шкулĕнче вĕренӳ çулĕн виççĕмĕш чĕрĕкĕ пĕтиччченех классем хушшинчи ăмăртăва пĕтермен. Унтан та ытларах «Чăваш Коммуни» хаçатăн корреспонденчĕ Т. Иванов юлташ Юнкă шкулĕн ĕçĕсене хаçат урлă малта пыракан шкулăн ӳсĕмĕсем пек кăтартса пама пикеннĕ. Вăл хăйĕн статьинче вĕренӳ пахалăхне пĕтĕмĕшле илнĕ процентсем тăрăх кăтартса панă, Юнкă шкулĕнчи учительсем малта пыракан е тата кая юлакан классен ĕçне пĕтĕмĕшле илнĕ процентпа хакланине ырланă. Иванов юлташ вĕренӳпе воспитани ĕçĕн тĕп тĕллевĕ — ачасене çирĕп пĕлӳ парасси çинчен манса кайнă. Муркашри вăтам тата ытти хăшпĕр шкулсенче те вĕренӳпе воспитани ĕçĕнче сивленĕ меслетсемпе усă кураççĕ.

Кăтартнă фактсем асăннă шкулсенчи учительсем тата хăшпĕр райсутĕç пайĕсен заведующийĕсем ку таранна çитсе те РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе кăларнă приказсен пĕлтерĕшне ăнланса илменни çинчен калаççĕ. Районсенчи çутĕç пайĕсем вĕренӳ ыйтăвĕсемпе ĕçлес вырăнне хуçалăх ыйтăвĕсемпе ытларах ĕçлеççĕ. Учительсен тата шкул директорĕсен ĕçне тĕплĕн тĕрĕслес, вĕсене вĕренӳ ĕçне лайăхлатма ĕçлĕн пулăшассине кирлĕ пек организацилемен. Райсутĕç пайĕсен работникĕсем час-часах çапла калаççĕ: «Эпир 30 шкултан 25 шкула тĕрĕслерĕмĕр» е тата «эпир пур шкулсене те тĕрĕсленĕ», теççĕ. Анчах вĕсем пĕри те учительсем РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕн приказĕсене мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен тĕплĕн каласа пама пултараймаççĕ. Шкулсене çавăн пек ертсе пыни пĕлӳ пахалăхне «вăтам процентпа» хакланинчен нимĕнле те уйрăлса тăмасть.

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ те шкулсенчи вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас енĕпе çителĕксĕр ĕçлет. Çутĕç Халăх Комиссариачĕн работникĕсем паян кунччченех хăйсен ĕçне çĕнетсе лайăхлатасси çинчен сӳтсе-явиппех лăплансa тăраççĕ. Вĕсем сайра хутра районсенчи çутĕç пайĕсен заведующийĕсен отчечĕсене итленипе килĕшсе ларма пăхаççĕ. Инспекторсем шкулсенче сайра хутра кăна пулаççĕ, малта пыракан учительсен опытне сарассишĕн тăрăшмаççĕ. Шкулсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе те татăклă мерăсем йышăнмаççĕ.

Ачасене çирĕп пĕлӳ парасси ответлă та пысăк ĕç. Ку ĕçе пĕтĕм учительсемпе çутĕç работникĕсем тимлĕн ĕçлесен кăна ăнăçлăн туса пыма пулать. Çакна пирĕн яланах асра тытса ĕçлемелле.

Вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче учитель тĕп вырăн йышăнса тăрать. Унăн хисеплĕ задачи—ачасене çирĕп пĕлӳлĕх тата лайăх воспитани парса çитĕнтересси. Çак ĕçе ăнăçлăн туса пырас тесен, учителĕн хăйĕн квалификацине, пĕлӳлĕхĕпе пултарулăхне тăтăшах ӳстерсе пымалла. Вĕренӳре ачасен ответлăхне ӳстерес тени вăл учительсен ответлăхне ӳстерессине те пĕлтерет. Учитель урокĕсене ирттерме тĕплĕн хатĕрленме, вĕренмелли материалсене ăнланмалла каласа пама, вĕреннĕ материалсене яланлăхах çирĕплетсе хăварма тивĕçлĕ.

Шкул руководителĕсемпе райсутĕç пайĕсен работникĕсен шкул ĕçне тĕрĕслесе тăрассине кăтартуллă организацилемелле. Вĕсен шкул пурнăçĕнчи пĕтĕм ыйтусемпе, учительсен пур ĕçĕсемпе те интересленмелле. Учительсене ачасене вĕрентес ĕç çине большевикла пăхма, хăйсем умĕнчи хисеплĕ задачăсене лайăх пурнăçа кĕртсе пыма вĕрентмелле. Учительсене заочно йĕркепе вĕрентессине те тĕпренех лайăхлатмалла. Шкул руководителĕсемпе çутĕçпай работникĕсен заочно йĕркепе вĕренекен учительсене лайăх условисем туса памалла. Çавăнпа пĕрлех вĕсен вĕренӳри ответлăхне çĕклемелле.

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн шкул управленийĕн шкулсен тата райсутĕç пайĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăрассине тивĕçлипе йĕркелемелле. Шкулсен тата учительсен ĕçне тĕрĕслемелли майсене, çĕнĕрен тишкерсе тухса, çитменлĕхсене халех пĕтерес пулать, шкул управленийĕн ĕç планне вĕрентӳпе воспитани ыйтăвĕсене çеç кĕртмелле.

Инспекторсен шкул ĕçĕсене тĕрĕслеме малтанах тĕплĕн хатĕрленмелле. Вĕсем учительсемпе тата шкул директорĕсемпе тачăн çыхăнса тăма тивĕçлĕ. Шкул управленийĕнчи работниксене тĕрлĕ хуçалăхри ĕçсенчен хăтармалла. Çакă вăл палăртнă çитменлĕхсене сывăх вăхăтрах пĕтерме пулăшать.

Вĕренӳ çулĕн юлашки чĕрĕкĕ иртсе пырать. Тепĕр уйăхран пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пуçланаççĕ. Çурхи тĕрĕслӳсене лайăх организацилесе ирттерме кирлĕ мероприятисене халех палăртса хумалла. Кашни учитель тĕрĕслеве мĕнле ирттермелли çинчен калакан инструкцие пĕлсе тăтăр. Тĕрĕслӳ ирттермелли расписанисене тата билетсене çак сывăх кунсенчех хатĕрлесе çитермелле. Учительсен вĕренӳ çулĕнче вĕреннĕ материалсене çирĕплетсе хăварас тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕн тăрăшмалла.

Совет шкулĕ çĕршыв умĕнче хăйĕн çулталăк хушшинчи ĕçĕшĕн отчет тума хатĕрленет. Совет учителĕсем тата çутĕç работникĕсем çак хисеплĕ тĕрĕслӳре хăйсем тăван çĕршыва чĕререн парăнса ĕçленине кăтартса парĕç.

И. ОРТИКОВ.

Ответлă редакторăн
заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00074 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.